

# МЕДИА – пирĕн чунра

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕ – Светлана Чикмякова



*Вăрнарти 2-мĕш шкул округри чи пысăк вĕренӳ организацийĕ пулнипе кăна мар, кунта хастар та маттур ачасем пуррипе те уйрăлса тăрать. Директорăн советникĕсем Ольга Косарева тата Анастасия Крючкова, предмет вĕрентекенĕсем, класс ертӳçисем пулăшнипе ачасем медиауçлăхпа туслашаççĕ.*

*Вĕренекенсен ĕçĕсем «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатра чылай пичетленеççĕ. Вĕсем çырма та, фото ӳкерме те, социаллă сетьсем валли информацисем çырма та ăста. Паян – ку шкул ачисене сăмах.*

## Чăн суйлав пекех



**Нумаях пулмасть пирĕн шкулта вĕренекенсен самоуправленийĕн президентне суйларĕç. Ăна тĕплĕн хатĕрленчĕç. Вăл чăн-чăн суйлава чăннипех те çывăх пулчĕ.**

Суйлавçăсем шутне 5–11-мĕш классем кĕчĕç. Сасăлава вĕренекенсен 90 проценчĕ хутшăнчĕ.

Суйлав кампанин мĕнпур тапхăрне шута илнĕ: шкул суйлав комиссине йĕркеленĕ, кандидатсене тăратнă, вĕсене регистрациленĕ, агитаци тапхăрĕ, сасăлав, сасăсене шутлани тата сасăлав пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх протокол çырни.

Шкул президенчĕн посчĕшĕн виçĕ кандидат кĕрешрĕç: 9-мĕш Б класри Дарья Семенова, 9-мĕш А класри Ксения Григорьева тата 10-мĕш класри Аня Бурмистрова. Вĕренекенсем-суйлавçăсем хăйсен сассине ытларах Дарья Семеновашăн пачĕç. Вăл шкул президенчĕ пулса тăчĕ.

**Виктория ТАТАРОВА, 8-мĕш В класс**

## Культурăсен пĕрлĕхĕ




**Çак эрнере, ноябрĕн 4-мĕшĕнче, Халăх пĕрлĕхĕн кунне паллă тăватпăр. Пирĕн шкулта вĕренекенсем те унпа çыхăннă мероприятисене хастар хутшăнаççĕ.**

Уяв умĕн йĕркеленĕ «Культурăсен пĕрлĕхĕ» акци ачасемшĕн те кăсăклă. Вăл тĕрлĕ номинацире иртет. 5-мĕш А класри Кира Григорьева, Валерия Краснова тата Анастасия Гордеева, акă, наци костюмĕсене кăтартрĕç.

Чăваш пикисем чăваш тумĕпе чăннипех те хитре.

**Екатерина СЕМЕНОВА, 7-мĕш Д класс**

## Професси суйласа

**«Билет в будущее» федераллă проект тата Пĕтĕм Раççейри «Турникет-сăр эрне» акци йĕркипе 9-мĕш В класра вĕренекенсем Вăрнарти хăйминчен уйăрнă типĕ сĕт заводĕнче пулчĕç.**



Вĕренекенсем предприятире кăларакан продукципе кăсăклансах паллашрĕç.

Вĕренекенсем йӳçек сĕт продукчĕсен, типĕ сĕт, услам çу производствисен цехĕсенче, лабораторире пулса курчĕç. Заводра тимлекенсен ĕçĕ яваплă та кирлĕ пулнине палăртрĕç.

**Дарья СЕМЕНОВА, 9-мĕш Б класс**

## Кĕнеке больници




**Нумаях пулмасть пирĕн шкулта директорăн советникĕ Ольга Косарева тата библиотекарь Татьяна Яковлева пуçарнипе «Кĕнеке больници» ĕçлерĕ. 7-мĕш В класра вĕренекенсем кĕнекесемпе журналсене йĕркене кĕртме пулăшрĕç.**

Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ, вăл çынран ĕмĕрсем хушши уйрăлмасть. Анчах та ун ĕмĕрĕ тата та вăрăмрах пултăр тесен ăна типтерлĕ тытмалла.

Татьяна Андреевна библиотекарь пулăшнипе кĕнеке мĕне юратманнине тата кăмăлланине пĕлчĕç. Алăран алла куçсан та вăл таса юлтăр тесен типтерлĕ пулмалла – акă мĕнлерех тĕп правило.

7-мĕш класс ачисем шкул библиотекине кĕнекесем те парнелеме пулчĕç.

**Полина ПЕТРОВА, 7-мĕш Д класс**

## Чун пуянлăхĕ пулмалла



**Çакна 2-мĕш классенче вĕренекенсене Вăрнар чиркĕвĕн настоятелĕ Александр Панзин ăнлантарнă.**

Пачăшкă ачасене Турă саккунĕсем, православи историйĕ пирки каласа кăтартнă. Ыйтусем çине хуравланă.

Чи кирли чун-чĕрепе яланах таса пулмаллине, шухăшра та усал ĕçсем тума юраманнине, ыттисене ура хумалла маррине ăнлантарнă. Çакнашкал тĕлпулусем çывăхри çынсене юратма, хĕрхенме, çавăн пекех ырăлăхпа йĕркелĕхе вĕрентеççĕ.

**Янина ИВАНОВА, 7-мĕш В класс**

## Ăнăçу векторĕ

**Пĕтĕм тĕнчери «Артек» ача-пăча центрĕнчи смена шăпах çак ятпа иртрĕ. Унта мана та хутшăнма тӳр килчĕ.**



Вĕренекенсен самоуправленийĕн лидерĕсен Пĕтĕм Раççейри форумĕ 57 регионти 1 пин ытла ачана пуçтарчĕ. Мĕн тĕрлĕ мероприяти иртмерĕ пулĕ унта?! Кейс-чемпионат, çавра сĕтелсем, тĕлпулусем.. Вĕсенче вĕренекенсен канашĕсен ĕçхĕлне сӳтсе явăмăр. Шкул самоуправленийĕн чи лайăх практикипе паллашрăмăр. Методика продукчĕсене хатĕрлерĕмĕр. Вĕсемпе çĕршыври вĕренӳ организацийĕсенче усă курĕç.

«Артекра» çĕнĕ туссем тупăнчĕç. Вĕсем тĕрлĕ регионтан. Вĕсемпе çыхăну тытсах тăратпăр.

Паллах, Пĕтĕм Раççейри форумри опытпа хамăр шкулта та усă курăпăр.

**София СМОЛИНА, 9-мĕш Б класс.**

**Медиа – пирĕн чунра** Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Юмах тĕнчинче



**Пур ача та юмах юратать. Çавăнпах ĕнтĕ республикăра шкул театрĕсен «Асам» фестивальне йĕркеленĕ.**

Вăрнарти 2-мĕш шкулта та ку жанра аталантарассипе тимлеççĕ. 2-мĕш А класра вĕренекенсем, акă, нумаях пулмасть белорус халăхĕн «Пых» юмахне лартса пачĕç. Рольсене кĕçĕннисем чăннипех те лайăх калăпларĕç. Асаттене Дима Якимов, асаннене Василина Шлюпкина, мăнука Настя Родионова, юмах калакана Саша Одырев вылярĕ.

Вĕренекенсем хăйсене чăн-чăн сцена çинчи пекех тытрĕç. Çавăнпа та пĕчĕк артистсен юмахĕ пурин кăмăлне те кайрĕ.

**Аделина ЕГОРОВА,**
**8-мĕш В класс**

# Астăвăм хаклă



**Вăрнарти 2-мĕш шкулта музей тахçантанпах ĕçлет. Çулсеренех вăл тĕрлĕ экспонатсемпе пуянланать.**

Нумаях пулмасть кунта чăвашлăх кĕтесĕ уçăлнă. Унта нацин йăлари, культурин предмечĕсем вырăн тупнă.

Музейра час-часах Паттăрлăх урокĕсем ирттереççĕ. Кунта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçипе çыхăннă экспонатсем чылай. Уйрăмах ачасене вăрçă паттăрĕсене халалланă кĕнекеальбом килĕшет. Унта пирĕн халăхăн историйĕ çырăннă.

**Юлия ДМИТРИЕВА,**
**7-мĕш А класс**

# Футбол чемпионĕсем



**Пирĕн шкулта спортпа туслă ачасем нумайăн. Вĕсем ача-пăча спорт шкулĕн, «Химик» спорт клубĕн секцийĕсене, бассейна çӳреççĕ.**

Шкулта та спорта пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ачасем физкультура учителĕсем пулăшнипе тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнаççĕ. Çĕнтерӳсем те сахал мар.

Çак кунсенче, акă, пирĕн шкулăн футбол командисем каллех округ первенствинче палăрчĕç. Хальхинче 2008–2009 çулсенче çуралнисен ушкăнĕнче. Хĕрачасен команди те, арçын ачасен те пысăк ăсталăх кăтартнă. Хĕрсем турнир чемпионĕсем пулса тăнă, каччăсем 3-мĕш вырăн йышăннă. Маларах 2010–2011 çулсенче çуралнисем хушшинче хĕрачасем 2-мĕш, арçын ачасем 1-мĕш пулнăччĕ. 2012–2013 çулсенче çуралнисем хушшинче икĕ команда та – çĕнтерӳçĕсем.

Тренерĕсем – Алексей Константинов тата Рустам Салахудтинов.

**Яна СЕРГЕЕВА,**
**7-мĕш А класс**